Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

1 (7535) № ✻ Кĕçнерни кун, 2008 çулхи январĕн (кăрлач) 10-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Çын ĕçпе илемлĕ



## Пĕрлехи ĕçре ӳсĕм туптанать

***Сăн ӳкерчĕкре эсир федераллă почта çыхăнăвĕн управленийĕн Муркашри почтамчĕн ĕçченĕсене – çыхăну операторне Любовь Николаевна Голубевана тата тĕп кассира Юлия Павловна Кузьминана куратăр. Юлия Павловна кунта 1973 çултанпа тăрăшать, çак тапхăрта пуян опыт пухнă, ĕç ӳсĕмĕн мелĕсене те аван пĕлсе çитнĕ. Любовь Николаевна вара коллективра виççĕмĕш çул кăна пулин те, çĕннине, малта пыракан ĕç мелĕсене хăвăрт алла илет, пĕлĕвне те ӳстерсех пырать. Хăйсен ĕçне чунĕсене парса пурнăçлаççĕ çыхăну ĕçченĕсем, кашни çынпах тараватлă. Коллективра та пултаруллă ĕçченсем хисепре.***

**В. ШАПОШНИКОВ**
*сăн ӳкерчĕкĕ.*

Район хыпарĕсем

## Пирĕн ентеш – виççĕмĕш

Пирĕн ентеш Татьяна Моисеева Германири Оберхофе хулинче биатлон енĕпе тĕнче кубокĕн ăмăртăвĕсене хутшăннă. Пĕрремĕш ăмăртусене хĕрарăмсем пĕрлехи стартран пуçланă.

Раççей чысне кунта виççĕн – пирĕн ентеш Татьяна Моисеева тата Екатерина Юрьевапа Светлана Слепцова хӳтĕлеççĕ. Пирĕн тĕп соперниксем – Германи спортсменĕсем. Старта нимĕççен çичĕ биатлонистки тухнă. Кун пек лару-тăрура ăмăртма çăмăл мар. Нимĕç спортсменки Магдалина Нойнер тӳрех мала ӳкнĕ. Ун хыççăн пирĕн Таня, Раççейĕн тепĕр спортсменки Ольга Анисимова тата Китай хĕрĕ Лю Сяньин ыткăннă.

Анчах пирĕн хĕрсем çухалса кайман. Ăнăçлă ăмăртса Ольга Анисимова иккĕмĕш вырăна тухнă. Унран 4 çеккунт юлса пирĕн Таня финиша виççĕмĕш çитнĕ.

## Çурт-йĕр çавăрма хушма пулăшу питĕ вырăнлă

«Ялсен 2010 çулччченхи социаллă аталанăвĕ» федераллă тĕллевлĕ программа ăнăçлă ĕçлени çурт-йĕр çавăрасинче пысăк пулăшу пулса тăрать. Çавна май 2007 çулта Муркаш районĕнче каялла тавăрса памалла мар субсидие яллă вырăнсенче пурăнакан 7 çын илме пултарчĕ, унăн калăпăшĕ 1230 пин тенкĕпе танлашрĕ. Çамрăк 9 çемье тата çамрăк специалист 4036,742 пин тенкĕлĕх субсиди илме пултарчĕ. Ăна валли федераллă бюджетран 1668,050 пин тенкĕ, вырăнти бюджетран 2368,692 пин тенкĕ уйăрнă.

«Çамрăк çемьесене валли çурт-йĕр» подпрограммăпа килĕшӳллĕн 2007 çулта пирĕн районта çурт-йĕр хакĕ 16 пин тенкĕпе танлашнă, 2006 çулта вара 12,350 пин тенкĕ пулнă. Çавна май иртнĕ çул каялла тавăрса памалла мар субсидие 9 çемье тивĕçнĕ, унăн калăпăшĕ 3234,495 пин тенкĕпе танлашнă.

«Çурт-йĕр лартма ипотека кредичĕ» тĕллевлĕ программăпа килĕшӳллĕн 6 çын 1926 пин тенкĕлĕх çăмăллатнă ипотека кредичĕ илнĕ.

## Валентина Егорован ывăлĕ мăшăрланчĕ

Çĕнĕ çемье чăмăртанни пысăк савăнăç кӳрет. Çакна вара январĕн 5-мĕшĕнче Олимп чемпионки Валентина Михайловна Егорова та аванах туйрĕ, унăн ывăлĕ Руслан мăшăрланчĕ.

Районта ку таранччен хура лимузинлă туй кортежĕ пулманччĕ-ха. Çак савăнăçлă кун вара Муркаш салинче хăйне май илемлĕх хуçаланчĕ.

Çемье чăмăртаннине çирĕплетекен свидетельствăна çамрăк мăшăра район администрацийĕн пуçлăхĕ Юрий Александрович Иванов савăнăçлă лару-тăрура пачĕ.

## Çулталăкăн пĕрремĕш кунĕ инкексĕр иртмерĕ

Шел пулин те, пурнăçра ырринчен усалли те аякка юлмасть. Январĕн 1-мĕшĕнче Шашкар ял тăрăхне кĕрекен Васильевка выççăлккинче ир-ирех «хĕрлĕ автан» хуçаланчĕ. Вут-çулăма йывăçран ăсталанă пӳрт кĕленчĕ. Унтан та хăрушăраххи вара çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлни пулчĕ. Çемье пуçĕн çунса кĕлленнĕ кĕлеткине Шупашкара ăсатнă. «Хĕрлĕ автан» юсавсăр электроплитаран тухнă тесе палăртаççĕ.

Инкек-синкек ума килессе кĕтес марччĕ. Электричество хатĕрĕсене вăхăтран вăхăта тĕрĕслесех тăрасчĕ.

Пире хаклани

### РФ Правительствин Председателĕн пĕрремĕш çумĕ Д.А. Медведев:

## «Чăваш Ен пек тухăçлă ĕçлекен регионсене малашне те пулăшăпăр»



Чăваш Республикинчи пĕтĕм тĕнчери ISO 9000 стандартсене тивĕçтернин сертификачĕсене илнĕ социаллă пĕлтерĕшлĕ организацисен шучĕ ӳсни (2003 çулпа танлаштарсан)




Республикăра управление производствăн çĕнĕ технологийĕсене ĕçе кĕртни предприятисене рынокра çирĕпленме тата бизнесăн ăнăçлă аталанăвне тивĕçтерме пулăшать. Сертификат пурри - ĕç пахалăхĕн гарантийĕ кăна мар, патшалăх саккасĕпе тата Раççейри чи пысăк компанисем валли продукци тăратакансенчен ыйтакан тĕп требовани те.

Паян Чăваш Енри промышленноç производствин 60 яхăн процентне тивĕçтерекен пысăк предприятисен пĕтĕм тĕнчери ISO 9000 стандартсене тивĕçтернин сертификачĕсем пур. Çакă вĕсене «Раççей чукун çулĕсем» АУО, «Раççей ЕЭСĕ» РАО, «Газпром» АУО, «АвтоВАЗ» АУО тата ытти компани поставщикĕ пулса тăма май панă.

2003 çултанпа пахалăх менеджменчĕн системисене сертификациленĕ социаллă пĕлтерĕшлĕ организацисен шучĕ 3 хут ӳснĕ.

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн пуçлăхĕн декабрĕн 12-мĕшĕнчи 570 № йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

Ял хуçалăх производствинче нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн

**Валерий Германович АЛЕКСАНДРОВА**, “Свобода” хуçалăх водительне.

**Роза Порфирьевна ДОБРЯНСКАЯНА**, Суворов ячĕллĕ хуçалăх ĕçченне.

**Светлана Михайловна УТКИНАНА**, “Оринино” хуçалăх тĕп бухгалтерĕн çумне.

**Татьяна Николаевна ФИЛИППОВАНА**, Суворов ячĕллĕ хуçалăх ĕне сăваканне.

Нумай çул ăнăçлă вăй хунăшăн тата обществăлла ĕçе активлă хутшăннăшăн **Михаил Афанасьевич ТРОИЦКИЕ**, “Герой” хуçалăх тĕп энергетикне.

Чăваш Республикин Юстици министерстви, Муркаш районсучĕ, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ, халăх вĕрентӳĕн ĕçченĕсен профсоюзĕн районти организацийĕн канашĕ, райадминистрацин ял хуçалăх пайĕ ыйтнисене тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн 2007 çулхи декабрĕн 27-мĕшĕнчи 605 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Çынсен гражданла акчĕсене регистрацилес енĕпе тунă çитĕнӳсемшĕн тата ЗАГС органĕсем 90 çул тултарнă май – **Маргарита Петровна РУБЦОВАНА**, район администрацийĕн ЗАГС пайĕн пуçлăхне.

2. Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Зоя Игнатьевна СЕМЕНОВАНА**, Чăваш Республикинчи Муркаш район сучĕн уборщицине;

– **Алевтина Гурьевна СМИРНОВАНА**, Чăваш Республикинчи Муркаш район сучĕн хуралне.

3. Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Зоя Петровна МИХАЙЛОВАНА**, «Ударник» пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн кадрсен пайĕн аслă инспекторне.

4. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Лайма Владимировна ГОРШКОВАНА**.

Çĕнĕ çула – çĕнĕ хаксемпе

## Электроэнерги, газ хакланчĕ

2008 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен электроэнерги хакĕ ӳсрĕ. Чăваш Енте унăн хакĕ çапла: хула çыннисем валли 1 квт. сех. 1 тенкĕ те 40 пус, ял çыннисем валли – 1 тенкĕ те 10 пус. Çапла майпа тарифсем 12,9 тата 12,2 процент ӳсрĕç. Электроплитасем вырнаçтарнă çуртсенче пурăнакансен 1 тенкĕ те 10 пус тӳлемелле.

Газ 25 процент хакланчĕ. ЧР Министрсен кабинечĕн 2007 çулхи декабрĕн 18-мĕшĕнчи 341 № йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн пин кубометршăн уйрăм çынсем 1936 тенкĕ те 38 пус тӳлеççĕ.

Баллонлă газ хакĕ çапла:

потребителе çитерсе памасăр – 1 килограмшăн 11 тенкĕ те 56 пус тӳлемелле,

потребителе çитерсе парсан - 1 килограмшăн 12 тенкĕ те 42 пус тӳлемелле.

Коммуналлă пулăшу тăкакĕсем те ӳсеççĕ.

## Ĕç укçи ӳсет

Çынсен кăмăлне çĕклес тесе влаçсем уйрăм çынсен ĕç укçине ӳстерме палăртаççĕ. Патшалăх Думин депутачĕсем бюджета тепĕр хут пăхса тухаççĕ. Ĕç укçине февралĕн 1-мĕшĕнчен 14 процент ӳстерме шутлаççĕ. Ку хыпар республикăра ĕçлекен бюджетниксене те пырса тивет. Пĕтĕмпе 121 пин çынна. Николай Федоров кирлĕ хушусем пана та ĕнтĕ.

Пенсионерсем те пулăшусăр юлмĕç. 2008 çулта пенсин страхлакан пайне февралĕн 1-мĕшĕнчен 8 процент, апрелĕн 1-мĕшĕнчен тата 7,5 процент ӳстерме палăртнă. Августăн 1-мĕшĕнчен пенсин тĕп пайĕ 15 процент пысăкланать, 1794 тенке çитет.

## 35 çулччен - çамрăк çемье

Ку таранччен Раççейри çамрăк çемьесене хваттерпе тивĕçтерме 30 çул тултарман пулсан явăтарнă. 2008 çул Раççейре - Çемье çулталăкĕ. Владимир Путин малашне 30 çулпа çырлахма кирлĕ маррине, çак ӳсĕме 35 çула çитермеллине палăртрĕ. Правительство ку ыйтупа ĕçлет те иккен. Апла пулсан кăçалтан çăмăллăхсемпе мăшăрсем 35 çулччен усă курма пултарĕç.

## Ӳнерçĕн вăрăм çулĕ




Николай Лукич Яковлев художника, çыравçăна республикăра аван пĕлеççĕ. Вăрçăпа ĕç ветеранĕ килте ларма шутламасть-ха. Кăçал унăн автобиографилле “Тернистый путь художника” альбомĕ пичетленсе тухрĕ.

Николай Лукич кĕнекине хăй нумай çул хушшинче ӳкернĕ пейзажсене, портретсене, плакатсене, шаржсене кĕртнĕ.

Çĕнĕ кĕнекене çак кунсенче районти культура ĕçченĕсем пахаларĕç. Сумлă ветеран ĕçне пысăка хурса хакларĕç.

Çак кĕнекепе вулакансем районти библиотекăсенче паллашма пултараççĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА** хатĕрленĕ.